# Чӳк уйăхĕн çирĕм тăххăрмĕшĕ
# Класри ĕç
# **Пирĕн шкул библиотеки**

# Çанталăк




- Паян урамра мĕнле çанталăк?
- Хĕвел пăхать-и?
- Çумăр (юр) çăвать-и?
- Çил вĕрет-и?
- Тӳпе мĕнле?
- Урамра шăнтнă-и?
- Сана паянхи çанталăк килĕшет-и?
- Мĕншĕн?

# Урок тĕллевĕсем:

- «Пирĕн шкул библиотеки» ятлă текстпа ĕçлесси. Вулавпа куçару, грамматикăпа лексика, диалог, çыру хăнăхăвĕсене аталантарасси.
- Шут тата йĕрке хисеп ячĕсемпе паллашасси, тĕрлĕ хăнăхтарусем пурнăçласси.
- Кĕнекене упрама, унпа тирпейлĕ усă курма вĕрентесси.



**Фонетика зарядки**

Çамрăкла вĕренни чул çинче,
ваталла вĕренни юр çинче.

(Ваттисен сăмахĕ)

elenaranko.ucoz.ru

# Çĕнĕ сăмахсем

- Ăшшăн калаçать – разговаривает  вежливо
- Тупса парать – находит
- Çурмастăп – не рву
- Кĕтес – угол
- Упрăр – берегите
- Тупра – богатство

## Пирĕн шкул библиотеки.

Кашни шкулта библиотека пур. Пирĕн библиотека иккĕмĕш хутра вырнаçнă. Вăл таса, çутă, хăтлă. Стенасене шурă шпалер çыпăçтарнă, чÿречесем çинче кĕрен штораcем çакăнса тăраççĕ. Пĕр кĕтесре илемлĕ те çÿллĕ чечек ларать. Вăл роза ятлă.

Пирĕн библиотекăра тĕрлĕ кĕнеке пур: вĕренÿ кĕнекисем, справочниксем, энциклопедисем, илемлĕ литература. Вĕсене кĕнеке шкафĕсенче тата витринăсенче курма пулать.

Шкул библиотекинче эпĕ час-часах пулатăп. Е реферат çырма материал шыратăп, е килти ĕçе тăватăп. Библиотекăра мана никам та кансĕрлемест. Кунта пурте шăп ĕçлеççĕ.

Пирĕн библиотекарь Алевтина Михайловна ятлă. Вăл ырă хĕрарăм. Пирĕнпе ăшшăн калаçать, кирлĕ литературăна хăвăрт тупса парать.

Эпĕ кĕнекесемпе тирпейлĕ ĕçлетĕп, вĕсем çине çырмастăп, страницăсене çурмастăп. Туссем, эпĕ сире çакна каласшăн: кĕнекесем сине ан сырăр, вĕсене упрăр. Кĕнеке вăл – пысăк тупра.



# Ыйтусем

- - Таньӑн шкулӗнче библиотека пур-и?
- - Вӑл миҫемӗш хутра вырнаҫнӑ?
- - Таня библиотекӑра час-часах пулать-и?
- - Унта вӑл мӗн тӑвать?
- - Алевтина Михайловна

библиотекарь ҫинчен

Таня мӗн каласа парать?



# Астăвăр!

- Кĕнекесем çине ан çырăр, страницăсене ан çурăр, вĕсене упрăр. Кĕнеке вăл – пысăк тупра.

# Хисеп ячĕсем

| **Шут хисеп ячĕсем**<br>Количественные числительные | **Йĕрке хисеп ячĕсем**<br>Порядковые числительные |
| --- | --- |
| **М и ç е?** | **М и ç е м ĕ ш?** |
| **Полная форма (1-10) Краткая форма** | **Полная форма + мĕш** |
| Пĕрре — пĕр кĕнеке<br>Иккĕ — икĕ пан улми<br>Пиллĕк — пилĕк канфет<br>Саккăр — сакăр мечĕк<br>Вуннă — вунă турилкке<br>} ~~-сем~~ | Пĕрремĕш<br>Иккĕмĕш<br>Пиллĕкмĕш<br>Саккăрмĕш<br>Вуннăмĕш |

**Распредели слова по вопросам.**

1) вуннă 5) вун пĕрмĕш 9) пĕрремĕш

2) саккăрмĕш 6) çĕрмĕш 11) пилĕк çĕр

3) пинмĕш 7) аллăмĕш 12) вăтăр

4) çитмĕл 8) тăххăр 13) улттăмĕш

| Миçе? | | Миçемĕш? | |
|---|---|---|---|
| | | | |
| | | | |
| | | | |



# Таня сĕнĕвĕ

Кĕнеке – пысăк тупра.
Эс ан çур ăна, упра.
Яланах тирпейлĕ пул,
Ӳсĕн ăслă та маттур.

# Киле ĕç

- 1) **«Пирĕн кил библиотеки» е «Пирĕн шкул библиотеки» ятлă калав çырмалла. Хисеп ячĕсемпе усă курмалла.** ***Ĕç тетрачĕ: 35 стр., 3 ĕç.***
- **2) «Пирĕн шкул библиотеки» ятлă презентаци туса килмелле, каласа памалла.**